И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ вунă общежити тытса тăрать. Вĕсенче 2903 студент тата вĕренӳ заведенийĕнче ĕçлекен 276 çын çемйисемпе пурăнаççĕ. Кăçалхи çĕртме-çурла уйăхĕсенче 7-мĕш общежитин сылтăм пайне тĕпрен юсаса çĕнетнĕ, 510 студент валли пурăнма хăтлă условисем туса панă.

— Халĕ кунта туслă пурăнмалла кăна. Тата тăрăшса вĕренмелле, — терĕ юсав хыççăнхи общежитипе паллашнă май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. — Андрей Александров ректор хăйĕн сăмахне тытрĕ. Вăл студентсене хăтлă пӳлĕмсем туса пама шантарнине лайăх астăватăп. Паллах, пĕр çулталăкра пĕтĕмпех йĕркене кĕртме май килмест. Анчах пурте пĕрле вăй хурсан йывăрлăхсене çĕнтерме пулатех.

Университет ректорĕ Андрей Александров пĕлтернĕ тăрăх — общежитие юсама кăçал фе-дераци бюджетĕнчен 30 миллион тенкĕ уйăрнă. Пластик чӳречесем лартнă, алăксене, электропроводкăна, шыв пăрăхĕсене тĕпрен улăштарнă, канализаци тытăмне çĕнетнĕ. Пӳлĕмсен урайне линолеум /1424 тăваткал метр/ сарнă, кухньăпа душ пӳлĕмĕсенче ка-фель плити çыпăçтарнă. Мĕнпур пӳлĕмре университет мастерскойĕнче ăсталанă сĕтел- пукан вырнаçтарнă.

— Университетăн общежитисене тĕпрен юсамалли тата реконструкцилемелли программин пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленчĕ. Çитес эрнере студентсем кунти пӳлĕмсене йышăнĕç. 7-мĕш общежитин сулахай пайĕнчи ĕçсене строительсем юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен вĕçлеме палăртаççĕ. 2017-2018 çулсенче 3-мĕш общежитире юсав ĕçĕсене пуçлăпăр, — çӳлерех асăннă программа вăрахлăха пулнине палăртса пĕлтерчĕ ЧПУ ректорĕ.

Пӳлĕмсене пăхса çаврăннă хыççăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев сту-дентсемпе, кунта ĕçлекенсемпе калаçрĕ. Университетра çĕршыври 20 ытла регионтан, ют çĕршывсенчен килнĕ çамрăксем пĕлӳ илеççĕ.

— Чăваш университетне хисеплеççĕ. Кунта вĕренекенсем валли хăтлă условисем туса па-расси — пирĕн тивĕç, — терĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕн тĕп тухтăрĕ Николай Николаев.

Студентӑн талӑкри вӑхӑтӑн ытларах пайӗ университетра иртет. Общежитие вӑл ҫывӑрма кӑна килет. Анчах таса та ҫутӑ, тирпейлӗ пӳлӗмре канни, пушӑ вӑхӑта иртерни, паллах, кӑмӑла та ҫӗклет, вӑй-хал та хушать. Ҫапла майпа лайӑх вӗренсе диплом илсен республика аталанӑвӗшӗн ӗҫлеме, тӑрӑшма вӗсен кӑмӑлӗ те ытларах пулӗ.

**В. БАГАДЕРОВА. Газета "Хыпар". 2016. 29 августа.**